**Кĕт мана**

Кĕт мана, эп таврăнатăп, хĕрĕм,
Çурхи шыв пек хамăр таврана.
Ахаль мар калаççĕ: "Пурнăç йĕрĕ
Вăл çăка çулçи пек çавракa".

Уйăх урлă, Алтăр çăлтăр урлă
Ярăнать те ĕмĕт, пирĕн çеç
Хурлăхан пек тĕлсĕр хура хурлăх
Ял çинчен тĕтре пек сирĕлсен,

Кĕт мана, эп таврăнатăп, хĕрĕм,
Çуркунне пек хамăр урама.
Эпир савнă аслă совет çĕрĕ
Нихăçан та пулмĕ чурара.

Яланхи пек пулĕ пирĕн ирĕк,
Ирĕкре çĕршывăм - ват анне.
Хуласем те, аслă уйăм-хирĕм
Юсасан капланнă суранне –

Кĕт мана, эп таврăнатăп, хĕрĕм,
Çĕнтерӳ пек йышăнăн мана.
Паян мар... Эпир халь кунĕн-çĕрĕн
Хăвалатпăр юнлă тăшмана.

1942, апрель

*Кольцов, К. Кĕт мана / К. Кольцов // Чăваш сăмахлăхĕ : 10-мĕш класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки / Н.Г. Иванова, В. П. Никитин, С. С. Самсонова пухса хатĕрленĕ. – Шупашкар, 1996. – II пай. – С.287-288.*